# Сăмах ăстин сăмахĕ çирĕп

**Николай ТЕВЕТКЕЛ,**
**ЧР искусствăсен тава тивĕçлĕ ĕçченĕ**

Тепĕр чухне пĕр-пĕр çĕнĕ кĕнеке ятне вулатăн та аптраса ӳкетĕн: «Хăш вăхăтра пурăнатăп-ха эпĕ? Ĕнерхипе паянхи мĕнле майпа пĕр-перинпе сăмах тупма пултарăççĕ вара?» Çакнашкал шухăшпа алла тытрăм та эпĕ Геннадий Максимов çыравçăн кăçал пичетленсе тухнă «Сталин грамоти»* (Г.Максимов. Сталин грамоти. Шупашкар, 2005, 304 стр.) кĕнекине. Çамрăк çыравçăн самаях хулăн кĕнекинче калавсем, статьясем тата пĕр повĕç – ку вăл авторăн хăйĕн вулакансемпе ирĕклĕн калаçас ĕмĕтпе çырнă пĕрремĕш кĕнеке. Каларăм ĕнтĕ, «Сталин грамоти» тесен тӳрех иртсе кайнă ĕмĕрĕн ĕмĕлки сиксе тухать те ача пек çамрăк çĕнĕ ĕмĕрпе калаçу пуçласа ăнланмалла мар канашлу пуçланăн туйăнать. Хаяр ĕмĕр! Ак мĕнле хăтăрса калаçать çав ĕмĕрĕн çынни – иккĕмĕш тĕнче вăрçинче вутпа çулăм витĕр тухнă салтак-сапер хăйĕн çемйинче: «Аялтан аттен ӳсĕр сасси илтĕнчĕ: «Çеруш?! Ан кунта... Выльăхсене ма халĕ те хупман? Э-э! Мана-а кĕтетĕр, ирпит-кирпитсем?!» Çеруша купарчаран тапрĕ пулмалла. Тем нăч! турĕ. Тете чĕнмест. Сассăр йĕрет ĕнтĕ. Манăн та куççуль юхса анчĕ. Чĕтре-чĕтре нăшăклатăп. Атте тепре тапрĕ пулас. Çеруш саспах йĕре пуçларĕ. «Сасна кăларнă пултăр тулккĕш!» – ĕнерхи пекех хирĕлет атте.

Лупасай алăкне пырса шалтăртаттарчĕ (чăркăшмалли сăлтав шырать). «Ма яр-р-р! усăлмас ку? Ма хырмастăр юра?!»

Автор сăнарласа панă кил хуçи – салтак-сапер – улшăнса тăракан кăра характерĕпе «Сталин грамоти» калавра уйрăмах анлă пĕлтерĕшлĕ теме пулать. Кĕске калаврах пирĕн иртсе кайнă ĕмĕрĕн кăра тапхăрĕ сиксе тухать. Кам урлă тейĕр? Вăрçăри «Сталин грамотине» тивĕç пулнă салтак-сапер урлă. «Тăван çĕршывшăн! Сталиншăн!» – тесе атакăна кĕнĕ салтаксен шухăш-кăмăлĕ чăнласах та çакнашкалрахчĕ çав. Кăра та чăтăмсăр, каçарусăр та компромисла хутшăнусемсĕр. Сталинăн шелсĕр те кăткăс




политикине нименле тишкĕрӳсĕр ĕненсе çапăçнă салтака – çĕр ĕçченĕ, унăн тӳнтерле сăнарне çырса кăтартни пĕрре те килĕшмест. Акă мĕн калать вăл «пур халăхсен çулпуçĕ» хăйĕн хаяр кăмăлĕпе пин-пин çынсен пурнăçне лагерьсемпе тĕрмесенче сусăрлатса хăварнăшăн, айăпсăр-мĕнсĕр пĕтернĕшĕн тарăхса ашшĕне хирĕç çивĕч сăмахсем калакан ывăлне: «Кеорки, хăвна эс историк тетĕн-ха та, çавах ĕненмеллех, пĕтĕмпех ăнланмалла калаймарăн, ирпит-кирпит. Пĕтĕм айăпа Сталин çине кăна тиетĕн. Как путтă вăл пĕччен çеç пулнă...»

Калава вуласа пынăçем кăра кăмăллă салтакăн ашшĕ-амăшĕ – «кулак» семйи тесе айăпланнăскерсем – Çĕпĕр çĕрĕ çинче пĕтнине те пĕлетпĕр. «Атте, аçупа аннӳне эсĕ курман, вĕсен ăшшине туйса ӳсмен эсĕ», – тет кăра ашшĕне ывăлĕ. Чăнах та, автор хăйĕн геройĕ тепĕр чухне вырнаçусăр ĕçсем тума пултарнине те пытарса тăмасть. Ĕлĕкрех пулсан çакнашкал меслет нумай критике килĕшмен пулĕччĕ. Анчах кунашкал хĕрессĕр куштан çын сăнарĕ Хĕвеланăç Европăри классиксен те, вырăс тата Азири ăста çыравçăсен те пур. Мĕн тăвас тетĕн? Хăйсен полкне тĕрĕс мар приказа пула нимĕçсем пĕтерсе тăкнăшăн тарăхса сулахай алăсăр тăрса юлнă Кĕркури Сталина айăплать. Анчах «Сталин грамотипе» таврăннă ветеран çав тери хытă хĕнесе тăкать ăна. Çакнашкал тискер ӳкерчĕк пурнăça çав тери чуххăмăн ăнланса пурăнакан вăрçă ветераннĕ пачах та хисепрен кăларать. Сăлтавĕ – ăçта? «Сталин грамоти!» Анчах хăйĕн килпетсĕр айăпне çав тери чуна илсе ӳрет иккен ветеран. «Юпасем çинчи лампочкăсен çутинче атте Уксах Кĕркурисен килĕ еннелле пăрăнса кĕнине куртăм», – тет калав персонажĕ Кеорки.

Çур литр эрехпе хăй çав тери хытă кӳрентернĕ Кĕркури патне каçару ыйтма каякан «Сталин грамотиллĕ» ветерана каçарĕ-ши лешĕ? Пĕлместпĕр. Анчах ĕненетпĕр. Пĕр ялсем. Кеорки ывăлĕ те лăпланать. Тĕлĕкре хăйĕн кăра ашшĕ «Сталин грамотине» çунтарса яма хăтланнине курать вăл. Пăр çине кăвайт хурса, хăйне айăпа кĕртнĕ «Сталин грамотинчен» мĕнле те пулин хăтăласшăн вăрçă ветеранĕ... Хăтăлаять-ши?

Мана иртнĕ ĕмĕрĕн 60-мĕш çулсенче ЦК КПСС секретарĕ пулнă Никита Хрущев аса илĕвĕн +хаçатра пичетленнĕччĕ вăл= пĕр татăкĕ халĕ те канăçсăрлантарать. Сталин çапла каланă пулать Никита Сергеевича: «Ман ята малтан тĕпрен сумсăрлатса пĕтерсе хурĕç. Кайран çĕклеме пуçлĕç». Пурте пĕлетпĕр ĕнтĕ: ку ĕçе чи малтан Никита Сергеевич Хрущев хăй пуçарса ячĕ. Пур халăхсен çулпуçĕ мĕнле сумсăр ĕçсем тунине вăл партин ХХ съездĕнче тăрă шыв çине кăларчĕ теме юрать. Апла пулин те Никита Сергеевич Сталинăн нумай-нумай ĕçĕсен пĕлтерĕшне пĕрре те чакарасшăн пулман, теççĕ.

«Çĕрлехи ташă» калавра автор паянхи урăм-сурăм пурнăçпа пурăнакан ял тĕнчине сăнласа парать. Геннадий Максимов хăйевĕрлĕ сăнарлă чĕлхепе çырнине те палăртса хăвармалла. Пурнăçра пулса иртекен тĕрлĕ сценăсене çав тери ĕнентерӳллĕн çырса кăтартать: «Диван çинче выртакан Васса çурăк чанăнни пек чанкălти сасса итлесе йăлăхсах çитрĕ.

– Мĕн кунĕн-çĕрĕн лăпăр-лăпăр тăватăн çак эсĕ, мĕн лăркатăн? Хăлха йӳçĕхсе тухрĕ!»

Васçан вăхăтлăха арăмĕ пулса тăнă Кĕтерин те парăнмасть: «Радику-

лит тесе кунĕпе те çĕрĕпе кахал çапса выртатăн. Дивану та шăтса кайрĕ пулĕ ĕнтĕ».

«Çĕрлехи ташă» калаври курăмсем пурнăçри пекех чĕрĕ те канăçсăр. Калаври хĕрĕх çулта «упăшкинчен пач уйрăлса тăракан сарă çÿçлĕ ача çуратнă» Кĕтерин сăнарĕ кирек хăш чăваш ялĕнчен те сиксе тухать. «Лăпкă тăнă çĕртех тăвăл кăларма, çĕпре пек йÿçсе хăпарма, вĕчĕрхенсе-тилĕрсе кайма пултаракан» чăваш хĕрарăмне кирек мĕнле яла кайсан та тĕл пулатпăр. Автор ăсталăхĕ савăнтарать, тăван çырулăх анине тепĕр пултаруллă ĕçтеш çанă тавăрса ăнăçлă чун çимĕçне акма тытăнни – хăех вăл пысăк парне. Анчах автор сăпайлăхĕ те пĕчĕк мар. Ку вăл хăйĕн хайлавĕсен чăн-чăн хакне хальлĕхе именчĕклĕ кăмăлпа çеç пăхкаласа илнинчен те килет пулĕ. Ĕçтешĕсем те вулаççĕ-ха вĕсене. Йăл-йăл кулкаласа илеççĕ, тепĕр чухне йĕкĕлтесе те илкелеççĕ. Мĕншĕн тесен ĕçтешĕсем те «Хыпар» хаçат журналисчĕсем. Геннадий Максимов хăй те журналист. Кăкăра çапса «Эпĕ паянхи чăваш калавçисенчен чи пултарулли-и!» – тесе пĕрре те сас памасть. Илтмен! «Çĕрлехи ташă» калаври амăш ачашлăхĕпе чăтма çук иртĕхсе кайнă Йынккав тĕрлĕ классиксем сăнарласа-ÿкерсе панă персонажсенчен пĕрре те кая мар. Кăна эпĕ ÿстерсе каламастăп. Çакна та манса каймалла мар: эпир яланах вырăс е ют çĕршыв классикĕсен асра юлакан сăнарĕсем епле витĕмлĕ е курăмлă пулса тухнипе мухтанма юрататпăр. Çав вăхăтра хамăр ĕçтешсен çырулăхĕнче сикесике тухакан ахахсене пачах та курмăш пулатпăр. Çакна ытларах хăйсем малтан сăвă-калав çырса пăхнă хыççăн юравлă кăмăлпа çÿлтисене илĕртсе, ăслă та лайăх çын пек курăнса тĕрлĕ пичет ĕçĕсенче пысăк вырăн йышăнса ларма тăрăшнă çынсен икĕ питлĕхĕ кăтартса парать. Вĕсемех 30-40 çул ытларах литература тÿри тата эталонĕ пек тыткаласа хăшне-пĕрне вĕçĕмсĕр ура явса ÿкерме тăрăшни, теприне пичетри пуçлă пуканне йышăннăран çав тери çÿле çĕклени – паянхи тăван çырулăхăн чăн-чăн аталанăвне чарса тăни. Камсем вĕсем? Чăн-чăн çыравçăсем-и е ĕлĕкхи идеологи хÿттипе саркаланса ÿснĕ пÿлĕмри чечек куршакне лекнĕ çум куракĕ? Çакнашкал ыйтăва вăхăт татса парĕ. Анчах Г.Максимов калавĕнчи ачаш ача Йынккав 18 ĕмĕрте вырăс драматургинче пуçласа тăрăхлавпа питлев чĕлхипе Д.И.Фонвизин çырса кăтартнă «Нăйăлкка» («Недоросль») камичĕн Митрахванĕ пекех çурма ăслă иккен. Пуян çемьере çуралнă Митрахвана пур енчен те тарçă-тĕрçĕ хÿтĕлесе тăрать пулсан, унашкал хурал çук Йынккав тавра. Ку вăл – каламасăрах паллă ĕнтĕ – социаллă танмарлăхран килет. Паянхи кун – нумай çĕрте! – митрахвансемпе йынккавсен пурнăçĕ.

Хăйĕн Ваççине – сывлăхсăр упăшки пеккине – Кĕтерин йĕркесĕрленсе пыракан ывăлне пĕр сивĕ сăмах та калаттармасть. «Ывăлăмăра тем те пĕр каласа хамăртан пистерер мар. Ачаранах кÿренсе ÿсекенсем кутăн, чĕмсĕр те ашкăнчăк пулакан», – тесе ăс парать Кĕтерин.

Хăйĕн пĕртен-пĕр ачине темĕн те пĕр илсе парать. Йынккава япшар çÿрет вăл. Купăс та илсе парать, ачи мусăкçă пуласса ĕненсе пăрахать, искусствăн çĕнĕ чаплă çынни ял халăхне тĕлĕнтерсе ярас пек туять. Анчах Йынккав шкула та çÿремест, урокĕсене те вĕренмест, юлашкинчен вăрра вĕренсе каять, ашкăнчăк ачасен ушкăнĕпе çапăçса çÿрет, эрех ĕçме вĕренет, пĕр харкашура вара хăйĕн йĕркесĕр-латсăр çамрăк пурнăçĕн финалне те шыраса тупать. «Ют яла пекĕсĕр нихăçан та тухман Йынкка», – вулатпăр калавра. Çак пекĕ шăпах та ашкăнчăк Йынккав шăпине татса парать те ĕнтĕ. Хĕре пусмăрлас ĕмĕтпе çинçе пилĕкĕнчен ярса илсен, Йынккаран чылай лутра çамрăк ăна бокс меслечĕпе çапса ÿкерет. Йынкка ăна – кÿтсе-тарăхса кайнăскер – вăрттăн-хĕрттĕн майпа хырăмĕнчен çĕçĕпе чикет. Хăй мĕн туса хунинчен хăтăлас шутпа Йынккав эрехре çăлăнăç шырать. Чирлĕ ашшĕне, амăшне ташлаттарать... Юлашкинчен амăшне хĕнеме пуçлать. Анчах явап тытмалли вăхăт саманчĕ те сывхарса пырать. «Кĕтÿ хăвалнă тĕлелле Мясниковсен килĕ умне милици машини çитсе чарăнчĕ»... Финал!

Хальхи вăхăтра пурнăç тилхепине алран вĕçертнĕ çынсен тĕрлĕ йышĕ мĕнле пурăннине ĕненмелле çырсасăнласа панă май Геннадий Максимов хăйĕнчен аслăрах çыравçăсен ăсталăхне тĕпчеме те манса каймасть. Çавăнпа эпĕ унран интервью пекки те илсе каласас терĕм.

– Кала-ха, Геннадий Аркадьевич, социализм тапхăрĕпе хальхи Раççей (кунта Чăваш ен сасси те кĕрет тейĕпĕр) çырулăхĕ мĕнпе уйрăлса тăрать?

Г.М. Паянхи Раççей (Чăваш ен те çаплах) капитализмăн пĕрремĕш тапхăрне кĕнĕ тесе калама пулать. Çавăнпа кирек мĕнле çĕнĕ йĕркеленÿ те тикĕс çулпа пымасть. Ман шутпа паянхи çыравçăн паянхи вăхăт пульсне лайăх туйса тăмалла. Кунашкал чирлĕ процесс малтанлăха Хĕвеланăç çĕршывĕсенче те, Америкăра та пулса иртнĕ. Обществăн сăн-сăпатне сăнласа кăтартакан çырулăх пачах та кирлĕ мар пек тесе ĕнентерекенсем те пур. Вĕсем çав тери йăнăшаççĕ. Хĕвеланăç Европăра та, Америкăра та çакнашкал кăткăс вăхăт тапхăрĕнче тĕнчипе чапа тухнă пысăк поэтсемпе прозаиксем сасă панă. Вĕсен хушамачĕсемпе ячĕсене асанса та пĕтерес çук. Паянхи çыравçă хăйĕн тавракурăмне ĕненсе çырать. Ĕлĕкхи пек çÿлтен хушнă тĕрлĕ кăтартусемпе ĕçлемест вăл. Ăна эпир «социализм реализмĕ» теттĕмĕр. Акă эпĕ Денис Гордеева пысăк хакпа вуласа хавхаланатăп. Вăл çеç-и? Чăваш халăх писателĕ Л.Таллеров çырса кăларнă «Шеремет» роман та, çав тери вырнаçуллă чĕлхепе тата пурнăç сăнлăхĕсемпе пĕлсе усă курса çырнăскер, тарăн шухăша ярать. Сергей Павловăн «Сĕлкĕш» романĕ те хăйĕн еверлĕ тĕрлĕ пулăмсен сценисене ĕнентерÿллĕн кăтартса парать. Ку вăл – тĕрлĕ сăн-сăпатлă пурнăç. Тĕрĕссипе илсен, паянхи çыравçăсем, манăн ĕçтешсем, ĕлĕкхи пек писательсен союзĕнчен путевка илсе кану çурчĕсене кайса çырмаççĕ. Вĕсен тĕп профессийĕ – журналистика. Хаçатне те кăлармалла, тĕрлĕ материал пăхса тухса кирлĕ хак пама та вăхăт тупмалла. Çав хушăрах, шухăш-кăмăл ÿкерчĕкĕсем канăçсăрлантарса çитерсен, алă ирĕксĕрех хутпа ручка тытать. Çыру сĕтелĕ хушшине пушă пуçпа кĕрсе лармастăн çав.

– Хальхи хĕрарăм çыравçăсенчен хăшĕ ытларах пурнăçа туллин те ĕнентерÿллĕн кăтартса параççĕ? Паянхи чăваш çырулăхĕнче вĕсен йышĕ те сахал мар.

Г.М. Мана ытларах Улька Элмен кĕнекисем килĕшеççĕ. Ăна ял халăхĕ те, хулари чăваш вулаканĕ те килĕштерсе вулать тенине илтнĕ. Кĕнекисене хăвăрт туянаççĕ иккен. Ку вăл нумая пĕлтерет. Хура халăх хăйĕн тепĕр çыравçине тĕпеле лартнине пĕлтерет вăл.

«Тĕрĕс калать. Чăн сăмахăн суйи çук, çÿп сăмахăн туйи çук» тесе çеç калас килчĕ. Шухăша кайрăм.

Хальхи вăхăтра литература тĕпчевçисем – кашниех! – хăйĕн аршăнĕпе виçсе пĕтĕмлетӳ тума тăрăшаççĕ. Ман пирки те çапла калĕç. Калаччăр! Анчах иртнĕ вăхăтри е паянхи ӳсĕме тĕпченĕ чухне вăхăт факторĕсене яланах асра тытмалла пек туйăнать. Çакна та палăртмалла: литературăпа ӳнер е юрă-кĕвĕ (музыка тейĕпĕр) ĕмĕрсем хушшинче хăйсен тивĕçлĕ аршăнне +эталонне= тĕрлĕ халăх кăмăлĕпе юравлă виçе тупма пултаракан ăстасем кашни кун килсе тăмаççĕ. Анчах та çав виçерен пăрăнса час-часах темĕн тĕрлĕ хуçкаланакансен йышĕ те пĕчĕк мар. Вĕсен ваккачĕсем – тӳрре кăларакансем «ку чăнласах та чи-чи тĕрĕс виçе» тесе ĕнентерме тăрăшсан та пурнăç куçĕ йышăнмасть. Ман алра 5 çул каялла Николай Климонтович журналист-писатель «Труд-7» хаçатра (16.03.2000) Александр Неверова панă интервью та пур. Çакăн пек ыйту панă паллă писателе А.Неверов: «Паянхи кун сехет маятникĕ реализм еннелле сулăнчĕ мар-и? Енчен те пĕр 5-6 çул каялла пĕр критик шутласа тăмасăр «çамрăксем хальхи вăхăтра брокерсем пулма е постмодернист çулĕпе чап шыраса чупма хатĕр» текелетчĕ пулсан, вăхăт сăн-сăпачĕ улшăнчĕ...» Н.Климонтович: «Ку чăнласах та çапла: литературăра пурне те юрăхлă чĕлхе тупас текенсем хытă йăнăшрĕç пулас. Темĕн пек тăрăшсан та постмодернизмăн хăй ĕмĕтленнĕ чĕлхи çук. Ан тив, вĕсен йышĕнче çав тери талантлисем пулччăр. Вĕсем пурпĕрех хăйсен сассине тупаймĕç. Сăмах май каласан, Хĕвеланăçĕнче реализм тепĕр хут вăй илме тытăнчĕ...»

Ку сăмахсене темиçе роман авторĕ Николай Климонтович литература çинчен çапла калани тĕлĕнтерет.

Мĕншĕн тесен вăл иртнĕ ĕмĕрĕн 80-мĕш çулĕсенче тавлашуллă романсем çырса С.П. издательствăпа та сутлашса пĕтнĕ. Александр Неверов панă тепĕр ыйтăва епле хуравлани те кăсăклă: «Темĕнле куçăм векторĕ пур, теççĕ, пурнăçра. Ыйтас килет: ăçталла? Сирĕн шухăш-кăмăл мĕнле улшăнса тăрать çакнашкал куçăмра?» Николай Климонтович çапла хуравлать: «Каçарăр та, ку вăл марксизм моделĕ. Унăн вĕрентĕвĕнче общество пĕрмай таçта куçса пыни çинчен каланисем пур. Политика моделĕ улшăнать-ха, лайăх пĕлсе тăратпăр çакна, анчах тĕрлĕ формацисем улшăнса тăраççĕ пулин те çыннисем вара ытлашши улшăнса пынине халиччен те курмастăп...»

Мускаври М.Горький ячĕллĕ литература институчĕн çумĕнче Аслă курссенче лекцисем итленĕ вăхăтра ку çĕнĕлле шухăшлакан писательпе темиçе хут та çапăнса иртнĕ пулĕ. Ку писателе КГБ куçĕ те асăрхаса тăнă иккен. Анчах вăл тĕрлĕ формацисенче çынсен шухăш-кăмăлĕ улшăнмасть тенипе килĕшсе каясах килмест. Çĕнĕ Йĕркеленӳ пуçланнă вăхăтра çынсен шухăшкăмăлĕ ытларах палăрать. Пытанчăк икĕ питлĕ çынсен сăнарĕсем экран çинчи пекех курăнма пуçлаççĕ куçа. Шăпах та çакнашкал вăхăтра пултаруллă писательсен кĕтнĕ сехечĕ çитет. Пултаруллисем пĕр-пĕр пуçлăхăн хӳттипе ăшă йăвасем çавăрса пурăнмаççĕ. Авалхи Греци философĕ Платон çапла каланă: «Искусство чӳк ыйтать!» Тӳрремĕн каласан, чи-чи пултаруллисем халăх шухăшкăмăлĕн хăвачĕпе çĕкленсе ӳсĕмлĕ ĕçсем тăваççĕ.

Сăмахран, аслă вырăс поэчĕ А.Пушкин та хăйĕн пĕр çул çӳревĕнче калмăксем патĕнче хăнара пулать, лартса панă шăршлă апата куçне-пуçне пĕркелентермесĕр, чăтăмлăн çисе ярать. Апачĕ ĕнтĕ калмăк халăхĕн хăйне евĕрлĕ кулинарипе пĕçернĕскер пулнă-тăр. Ан çи-ха – хуçине кӳрентеретĕн. Енчен те Г.Максимовăн ачалăхĕпе çул-йĕрне тĕпчевлĕ куçпа тишкерсе тухсан, ăна литературăна шурă перчетке тăхăнса килнĕ тесе калама май килмест. Вăл халăх шухăшкăмăлĕн ăшшипе реххетленсе çырать.

Паянхи ял пурнăçне, хула çыннисен тĕпсĕр çыран хĕрринче йăшăлтатса хăш-пĕр ушкăнне (ку вăл унăн «Ачаллă хĕрарăм» калавĕнче тата «Бомж», «Суицид» тĕрленчĕкĕсенче ытларах палăрать) автор куçа курăнмалла сăнласа парать. Вăрнарти совхоз-техникум, Чăваш патшалăх университечĕ унăн тавракурăмне анлăлатма пулăшаççĕ. Журналистăн тĕрлĕ çаврăмлă çулĕ нумайнумай ӳкерчĕксемпе пуянлатать унăн астăвăмне. Ку вăл – чи кирли. Пĕчĕкрен хресчен ĕçĕнче вăй хуни, ял çыннисен шухăш-кăмăлĕпе пурăнни автора чăваш вулаканĕпе палланă тараватлă çын пек калаçма пулăшать. Çакна эпĕ унăн калавĕсене вуланă май сиссе илтĕм. Ку вăл – автор çаврăнăçуллăхĕ. Ют чĕлхепе каласан – унăн стилĕ. Кĕнекери «Шур пир çинчи мĕлке» (ку вăл – повĕç) хăйне евĕрлĕ сюжечĕпе тыткăнлать. Ку вăл – драма. Автор, тен, драма жанрĕпе çырма тытăнĕ. Мĕншĕн тесен кашни япала драма пурнăçĕпе сывлать ку кĕнекере. Чĕлхе тата сюжет пулмасан кирек мĕнле хайлав кĕвĕлĕхĕ те çухалать. Çакна çирĕп пĕлсе çырать Геннадий Максимов. Хальлĕхе вăл писательсен союзĕн членĕ те мар-ха. Мĕншĕн калатăп-ха çак сăмаха? Акă мĕншĕн. Хăшĕ-пĕри ĕмĕр тăршшĕпе кĕнеке издательствинче тата хаçат-журналта пĕр-пĕр пай пуçлăхĕ пулса тĕрлĕ вырăн пуканне якатса ларма хăнăхнăскер, халĕ те парти кăтартăвĕсемпе пурăннă пек пурăнать. Акă кăçалхи «Ялав» журналăн (3№) хуплашкинче пирĕн президентăн сăмахĕсем курăнса кайрĕç: «Искусствăпа литературăра çĕнĕ ăру хăйĕн çирĕп сăмахне каламалла». Çакăн хыççăн хăшĕпĕри «çамрăксене çул памалла» теме пуçларĕ. Ку сăмах вăл Неонилла Кузьмина-Петровская «Ялав» журналăн кăçалхи 5-6 мĕш номерĕсенче тинех хăйĕн «Суранлă чун» романне пичетлесе кăларма пултарнăшăн вĕçкелеме пуçларĕ. Автор вăрçă çулĕсенчи çамрăк ӳсĕмĕ ĕçпуçне, унăн ĕнси çине тиеннĕ пурнăç çĕклемĕ епле йывăр пулни çинчен çырса кăтартнă. Кăçал – Çĕнтерӳ Çулĕ. Авторĕ 4 çул каяллах çут тĕнчерен уйрăлса кайнă. Вилсен те тĕрлĕ падежсем урлă хутлас марччĕ унăн ятне. Кĕвĕçтерет-им?! Апла пулсан Геннадий Максимов калавĕсене мĕншĕн паянхи кун та асăрхаман-ха вĕсем? Чăн-чăн сăмах ăстине кашни кун кирпĕч пек çапса кăлараймăн. Геннадий Максимов çĕнĕ ăру представителĕ. Ман шутпа вăл литературăра хăйĕн çирĕп сăмахне калать. Анчах ĕмĕр тăршшĕпех тĕрлĕ кăтартусене хăйсен юрăхсăр кăмăлĕпе туса пыракансене, ĕлĕкхи идеологи журналçисене çакнашкал тăвата йĕркепе хурав тăвас килет:

*Тĕкĕпе, чаракпа шухăша*
*тĕкĕлемĕп –кӳренĕ хӳме,*
*Картари шурă хур йăлăнса*
*какăлтатĕ таса шыв кӳме.*
*Мăнтăрланнă хурне мăнтăр*
*шухăш килсен пусăп, терĕм,*
*Йĕм анса ларасран шухăша*
*лартса парăп тӳме.*